Йĕпреҫ районĕн хаҫачĕ

# ҪĔНТЕРӲШĔН

Шăматкун
2007 юпа, 20
84 /9001/№
Хаҫат 1932 ҫултанпа тухса тăрать
Хакĕ ирĕклĕ
электронлă адрес:
ibresi@press.cap.ru

**Ҫул-йĕр хуҫалăхĕн хисеплĕ ĕҫченĕсем тата ветеранĕсем!**

Сире професси уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп!

Эсир ывăнма пĕлмесĕр тĕплĕ тăвакан ĕҫ халăх хуҫалăхĕн мĕнпур отраслĕсене кал-кал ĕҫлемелли условисем туса парать, республика сăн-питне улăштарса ҫĕнетет. Хальхи вăхăтра тăвакан автомобль ҫулĕсем тата транспорт инфраструктурине аталантарни хуласемпе ялсене татах та илĕртӳллĕрех, ҫынсен пурнăҫне татах та лайăхрах тăваççĕ.

Чăваш Енри ҫул-йĕр строительстви паянхи кун пахалăх енĕпе тепĕр ҫĕнĕ шая ҫĕкленчĕ. Халăх пурăнакан мĕнпур пунктсене хытарнă ҫулсемпе сыпăнтарас енĕпе йышăннă историллĕ масштаблă проект ăнăҫлăн пурнăҫланса пырать. Унăн пархатарĕпех республикăн экономика пурнăҫĕ ҫĕнĕ вăйпа тапма пуҫлĕ. Умра тăракан чи перспективлă задачăсенчен пĕри – хула округĕсен урамĕсенчи ҫул-йĕр сечĕсене васкавлăн ҫĕнетсе лайăхлатасси тата аталантарасси. Республика тĕп хулинче тата ытти хуласенче ҫĕнĕ ҫулсем, кĕперсем тăвăпăр. Ҫак ĕҫсем хальхи вăхăтра хуласенче хуҫаланакан транспорт проблемисене татса парĕҫ.

Чăваш Енри ҫул-йĕр хуҫалăхĕн мĕнпур ĕҫченĕсен тăван республикăна чечеклентерессишĕн хывакан профессионализмне, яваплăхне, ăнăҫлă тăвакан ĕҫне-хĕлне ырлатăп. Сире пурсăра та малашне те ĕҫре ӳсĕмсем тума ырлăх-сывлăх, телей сунатăп!

*Чăваш Республикин Президенчĕ*
*Н. ФЕДОРОВ.*

Ҫул-йĕр хуҫалăхĕн хисеплĕ ĕҫченĕсем тата ветеранĕсем!

Сире професси уявĕ – Ҫул-йĕр хуҫалăхĕнче ĕҫлекенсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп!

Район аталанăвĕшĕн ҫав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ те чи кирлĕ отрасль вăл – ҫул-йĕр отраслĕ. Ҫĕнĕ, лайăх ҫулсем ҫынсен пурнăҫне лайăхлатма палăрмаллах пулăшаççĕ. Ҫул-йĕр хуҫалăхĕн ĕҫченĕсем тăрăшнипе, тĕпрен илсен, ялсемпе поселоксен сăнсăпачĕ улшăнать, общество инфраструктури аталанать. Груз турттарасси, пассажирсене илсе ҫӳресси, ҫул-йĕр хăрушсăрлăхĕ сирĕн ĕҫ пахалăхĕнчен килеççĕ.

Юлашки икĕ ҫулта ЧР Президенчĕн «Чăваш Республикин автомобиль ҫулĕсене тăвассине хăвăрт вĕҫлес енĕпе пурнăҫламалли мерăсем ҫинчен» Указĕ районта пурнăҫа кĕрсе пырать. Халăх пурăнакан кашни пункт хытарнă ҫулпа ҫыхăнтарас ĕҫре сирĕн тӳпе питĕ пысăк. Эпир сирĕнпе пĕрле малашне те социаллă пĕлтерĕшлĕ пысăк тĕллеве ăнăҫлă пурнăҫа кĕртессе шанса тăратăп.

Сире сывлăхпа ырлăх, телей тата ĕҫре ҫĕнĕ ҫитĕнӳсем сунатăп.

***Йĕпреҫ районĕн пуҫлăхĕ А. ПЕТРОВ.***

Дорогие дорожники! Уважаемые ветераны дорожной отрасли!

Поздравляю вас с профессиональным праздником, желаю крепкого здоровья, неиссякаемой энергии для преодоления трудностей в вашей тяжелой и благородной работе. Желаю благополучия в семейной жизни, больших творческих успехов в профессионализме, радости и счастья.

Пусть ваши добрые желания будут всегда с вами.

***С уважением Моисеев Алексей Иванович.***

## РАЙОН ХЫПАРҪИСĔР АН ЮЛĂР!

**Хаклă тусăмăрсем, хисеплĕ вулакансем! «Ҫĕнтерӳшĕн» хаҫата 2008 ҫулхи пĕрремĕш ҫур ҫул валли ҫырăнтармалли тапхăр пырать. Ăна ҫак хаксемпе ҫырăнтараççĕ:**

**ПОЧТА ҪЫХĂНĂВĔН УЙРĂМĔСЕНЧЕ – 169 тенкĕ те 62 пуспа;**

**«ЧĂВАШПИЧЕТ» АУО КИОСКĔНЧЕ – 120 тенкĕпе;**

**ХАҪАТ РЕДАКЦИЙĔНЧЕ /альтернативлă майпа/ – 105 тенкĕпе.**

**«Ҫĕнтерӳшĕн» ҫĕршыв, республика, район хыпарĕсене чи малтан пĕлтерекен хаҫат. Ăна ҫырăнса илме ан манăр!**



Юлашки вăхăтра районта ҫул-йĕр тăвас ĕҫ анлă сарăлчĕ. Чăваш Республикин Президенчĕн Н. В. Федоровăн тĕллевлĕ программине пурнăҫласа «Водстроймонтаж» ООО коллективĕ ҫак социаллă пĕлтерĕшлĕ ĕҫе хăйĕн тӳпине хывать. Ҫиҫĕмкассипе Мереҫен тата Алшике ҫыхăнтаракан ҫула тунă ҫĕрте ҫак организацин вун-вун ĕҫченĕ вăй хурать. Вĕсенчен пĕри – Михаил Михайлович Ванифатьев – хăйĕн тивĕҫне чыслăн пурнăҫланипе, сменăри заданисене ирттерсе тултарнипе хисепе тивĕҫнĕ. Ертӳҫĕсем те, пĕрле ĕҫлекенсем те ăна ырăпа асăнаççĕ.

**ӲКЕРЧĔКРЕ:** *М. М. Ванифатьев автогрейдерист.*

***Д. ДИМИТРИЕВ сăнӳкерчĕкĕ.***

## РЕСПУБЛИКА ХЫПАРĔСЕМ

**ЮНКУН** Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров Шупашкартан инҫех мар тума пуҫланă ГРС-3 никĕсне чул-капсула хурса хăварнă ятпа ирттернĕ савăнăҫлă митинга хутшăннă. Ҫак объекта республика тĕп хулинче тата Шупашкар районĕнчи халăх пурăнакан пунктсенче газпа ытларах усă курнăран тата вĕсене унпа шанчăклăн тивĕҫтерсе тăрас тĕллевпе тума палăртнă. «Газпром», «Газпромстройинжиниринг», «Волготрансгаз» пĕрлехи проекта (вăл 400 млн. тенкĕлĕх) ҫулталăкра туса ҫитерме тĕллев лартнă.

**ЮПА** уйăхĕн 16-мĕшĕнче К. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕ хăйĕн юбилейлă 90-мĕш сезонне Денис Гордеев писательпе Геннадий Кириллов драматургăн «Анаталла-тăвалла» драмипе уҫнă. Ҫак премьерăна Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров мăшăрĕпе, республикăн яваплă ҫыннисем, писательсемпе театр пĕрлĕхĕн представителĕсем ҫитсе курнă.

## СТАНЦИ ИЛĔРТӲЛЛĔ ВЫРĂН ПУЛĔ

Юнкун Чăваш Ене ĕҫлĕ визитпа «Раççей чукун ҫулĕ» АУО Горькин чукун ҫулĕн пуҫлăхĕ Сергей Козырев килсе кайнă. Унăн ҫулҫӳрев тĕллевĕ чукун ҫул службисем хĕллехи условисенче ĕҫлеме мĕнле хатĕрленнипе тата вырăнти инфраструктура аталанăвĕпе паллашассипе ҫыхăннă.

Сергей Витальевич Йĕпреҫ районĕнче чукун ҫулăн икĕ станцийĕнче пулнă. Район пуҫлăхĕ Анатолий Петров пысăк хăнана Буинск станцийĕнче кĕтсе илнĕ. Унти хуҫалăхпа паллашнă тата служба ĕҫне хак панă хыççăн Горькин чукун ҫул пуҫлăхĕ Буинскри станцин пуҫлăхне Вагиз Салахутдинова нумай ҫул тӳрĕ кăмăлпа ĕҫленĕшĕн асăнмалăх сехет парнеленĕ.

Унтан поезд Йĕпреҫ станцийĕнче чарăннă. Анатолий Петров Сергей Козырева районта Республика уявне хатĕрленсе ирттерессипе ҫыхăннă мероприятисен планĕпе паллаштарнă. Унта Йĕпреҫ поселокĕн станцине тирпей-илем кĕртессипе ҫыхăннă ыйту та тӳрремĕн кĕрет. Сергей Витальевич йĕпреҫсен ырă шухăшне ырласа йышăннă, асăннă станци район тата поселок ҫыннисемшĕн кăна мар, уява килекен хăнасемшĕн те чи илĕртӳллĕ те юратнă вырăн пулса тăрасси пирки шантарса каланă.

## ХАЛĂХПА ТĔЛПУЛУСЕМ ИРТНĔ

Юпа уйăхĕн 17-мĕшĕнче, пĕтĕм республикăри пекех, пирĕн районта та Пĕрлехи информаци кунĕ иртнĕ. Унăн тĕп темисем ҫаксем пулнă: «Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин 2007 ҫулхи суйлавĕ: суйлав саккунĕсем, хатĕрленӳ тата суйлавҫăсен активлăхĕпе ҫыхăннă ыйтусем», «Чăваш Республикинче халăха социаллă хӳтĕлесси: паянхи ĕҫ-хĕл тата тĕллевсем», «Чăваш республикин 2007 ҫулхи юпа уйăхĕн 10-мĕшĕнчи «Чăваш Республикинчи хула округĕсен урамсемпе ҫулйĕр сетьне хăвăрт аталантарасси ҫинчен» 87-мĕш номерлĕ Указĕ». Паян йĕпреҫсемшĕн Республика уявне районта ирттерес ыйту уйрăмах актуаллă.

Тĕлпулусем Йĕпреҫри предприятисенче, Буинск ял тăрăхĕн территорийĕнче тата ытти ĕҫ коллективĕсенче иртнĕ, вĕсенче республикăри тарифсен служби, хула строительствипе общество инфраструктурин аталанăвĕн министерствин, Чăваш Республикинчи ĕҫлев патшалăх инспекцийĕн представителĕсем, «И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ» аслă професси вĕрентĕвĕн ПВУ ректорĕ калаҫусем ирттернĕ.

## САЛАМЛАТПĂР

Ҫут тĕнчери чи хаклă ҫыннăмăра, юратнă мăшăра, аннене, ял ҫинче хисеплĕ хунямана, чи лайăх та чи хитре кукамая – Пысăк Упакассинчи **Елена Васильевна ПЕТРОВАНА** – пĕтĕм чун-чĕререн ăшшăн та хĕрӳллĕн ҫуралнă кунĕпе – 60 ҫулхи юбилейĕпе саламлатпăр. Чăваш юманĕ пек ҫирĕп те ирхи сывлăм пек таса сывлăх, сурпан пек илемлĕ те хуркайăк ҫулĕ пек вăрăм, тулăх кĕркунне пек пуян та ҫăлкуҫ пек тулли телейлĕ кун-ҫул сунатпăр. Тавах, сана, эс пурришĕн, пире тĕрек те савăнăҫ панишĕн.



Ылтăн пек ыр ҫыннăмăр, мăшăр, анне,
Эс салхуллă ан пул ĕмĕрне.
Ăшшăн-ăшшăн кулса кĕтсе ил эс пире,
Тивлетпе эс ҫитсемччĕ 100е.

***МĂШĂРĔ, ХĔРĔСЕМ, КĔРӲШĔСЕМ, МĂНУКĔСЕМ.***

х х х

Чăваш Ҫармăсра пурăнакан **Николай Романович ЯРЗУНОВ** ял хуҫалăх производствинче нумай ҫул тăрăшса ĕҫлет. Ăна Чăваш Ҫармăс ялĕнче пурăнакансем хастарлăхĕшĕн, ĕҫченлĕхĕшĕн, ҫынлăхĕшĕн хисеплеççĕ. Юпа уйăхĕн 16-мĕшĕнче вăл хăйĕн ҫуралнă кунне кĕтсе илчĕ, 60 ҫул тултарчĕ. Ҫав ятпа паян хăна-вĕрле пуҫтарăннă, салам сăмахĕсене калаççĕ, тав тăваççĕ. Эпир те ҫав йыша хутшăнатпăр.

Ҫул хыççăн ҫул иртсе пырсан та,
Чун-чĕрӳпе хĕрӳллĕ пул.
Умра тумхахлăрах пулсан та
Малтан-мала сан вырттăр ҫул.
Шухăшусем пурнăҫлансассăн,
Мĕн шыранийĕ тупăнсан,
Ҫакна ялан асра тыт эсĕ:
«Ҫын ватăлмасть ĕмĕт пулсан».

***АМĂШĔ, МĂШĂРĔ, 2 ХĔРĔ, 2 КĔРӲШĔ, 3 ЫВĂЛĔ, КИНĔ, ТĂВАНĔСЕМ.***

**25 октября 2007 года в 14.00 часов в детскую библиотеку п. Ибреси**

**ПРИГЛАШАЕМ ВСЕХ ЖЕЛАЮЩИХ**

**на просмотр и обсуждение фильма «Великая тайна воды».**

***ОРГКОМИТЕТ.***




НИ КОМПЬЮ СУПЕРМ

ПОДАРОК - ПРИ ПОКУПКЕ КОМПЬЮТЕРА

п. Ибреси, ул. Садовая, д. 7 /Дом быта/, 2 этаж, телефон: 2-22-62.

КРЕДИТ

www.nix.ru

# ÇĔНĔ ПРОЕКТСЕМ, КОНКУРСЛĂХ, ТАЛПĂНУ – ТĔП ПРИНЦИПСЕМ

**Раççей Президенчĕ В. В. Путин нумаях пулмасть пирĕн республикăна килсен Чăваш Ен учителĕсен ĕçне пысăк хак пачĕ тата Чăваш Ен наци проекчĕсене пурнăçлас ĕçре малта пынине палăртрĕ. Ку енĕпе мĕн туни тата мĕн тумалли пирки пирĕн корреспондент Чăваш Республикин вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министрĕпе Г. П. ЧЕРНОВАПА тĕл пулса калаçнă.**



***– Галина Петровна, Сирĕн шухăшăрпа «Вĕрентӳ» наци проекчĕ республикăра ăнăçлă пурнăçланса пынин никĕсĕ мĕнре-ши?***

– Наци проектĕнче палăртнă тĕллев – паха пĕлӳ илме майсем туса парасси – республикăн вĕрентӳ политикин тĕп ĕçĕ. Эпир ăна темиçе çул хушши, тепĕр чухне проектра палăртнинчен те пысăкрах хăвăртлăхпа пурнăçласа пыратпăр.

Чĕр тавар саппасĕсем çинчен çеç шутласа малалла кайма çуккине паян пурте лайăх ăнланаççĕ. Çакна проектра та, Раççей Президенчĕн Çырăвĕнче те палăртнă. Ку тĕлĕшпе илсен Чăваш Енĕн пуйма шанăç çук – вăл географипе экономика енчен тупăшсăр территорире вырнаçнă. Инноваци ĕçне хавхалантарни, интеллект капиталне аталантарни 1996 çулта – Президентăн «Çĕнĕ шкул» программине йышăннă чухнех тивĕçлĕ вырăн тупрĕ. Эпир хальхи вăхăтри база шкулĕсен эффективлă сетьне туса хурас çул-йĕре суйласа илтĕмĕр тата çапла туса йăнăшмарăмăр. Çакă вĕренекенсене, вĕсем ăçта пурăннине пăхмасăр, паха пĕлӳ илме май туса парать.

Республикăра 2002 çултанпа пĕчĕк, тарăн пĕлӳ парайман 700 шкул вырăнне эффективлă 544 шкул туса хутăмăр, вĕсем «шкул – ача сачĕ», социкультурăллă вĕрентӳ комплексĕ, ачасене пĕр çĕре турттарса вĕрентмелли база шкулĕ ресурс центрĕ модельсемпе ĕçлеççĕ.

138 пысăк база шкулĕпе ресурс центрĕнче финанс, пурлăхпа техника тата педагогика ресурсĕсем чăмăртанчĕç. Çакă пире пысăк пахалăхлă профиль умĕнхи тата профиль вĕрентĕвне йĕркелеме май пачĕ. Çакă пире мĕншĕн кирлĕ-ха? Мĕншĕн тесен, шкулăн чи пысăк задачисенчен пĕри – вĕренекенре хăй тĕллĕнлĕх личноçне çирĕплетесси, вăл хăйĕн умĕнчи пурнăç çулĕ мĕнле пулассине уçăмлăн туйса тăни. Паян ачана математикăпа, химипе, физикăпа тата ытти предметсемпе тарăн пĕлӳ пани çеç çителĕксĕр, çак пĕлӳпе практикăра, кулленхи ĕçре усă курма вĕрентни кирлĕ. Ачасем ĕмĕр тăршшĕпех вĕренме кирлине ăнланса илччĕр. Паянхи кунăн кăткăслăхне шута илсен, хăвăн пĕлĕвне пĕрмай ӳстерсе пымасăр ăнăçлă ĕçлеме тата конкурентсене парăнмасăр пурăнма май та çук. Кун пек лару-тăрура пурне те пĕр пек вĕрентни çителĕксĕр, кашни ачан пултарулăхне тата вăл мĕнле ĕçе юратнине шута илсе вĕрентмелле. Шăпах çакна шута илсе ĕнтĕ 2005 çултан пуçласа тăххăрмĕш классенче профиль умĕнхи хатĕрленӳ çине куçрĕç. Вĕренекенсем тĕрлĕ профессипе паллашаççĕ, психологипе педагогика диагностикине тата анкетировани ирттереççĕ, хăйсем суйланă профиль тăрăх консультаци илеççĕ. Çакă ачасене малашне хăйсене килĕшекен профессие суйласа илме пулăшĕ.

Профиллĕ вĕрентĕве аслă классенче вĕренекенсен 66,4 процентне явăçтарнă. Ялта профиль вĕрентĕвне кустри база шкулĕсене шанса панă. Вĕсенчен кашнийĕнчех 2-3 профиль йĕркеленĕ, аякра вырнаçнă шкулсенче вара урăх модельсемпе усă курма пулать. Тĕслĕхрен, çак варианта илер, вĕренекенсене уйрăм предметсемпе тарăн пĕлӳ пама шкул автобусĕсемпе ресурс центрне турттараççĕ, ачасемпе пĕрле унта вĕрентӳ предмечĕпе профиль шайĕнче ăс пама учитель хăй те килет. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче, акă, районти шкулсенче профиллĕ вĕрентĕве вĕренекенсен 86 процентне, ун умĕнхи хатĕрленӳ ĕçне вара ачасен 100 процентне явăçтарнă. Халĕ, пур шкула та анлă калăпăшлă Интернетсемпе çыхăнтарнă май, вĕрентӳн дистанциллĕ формипе аталантарса активлăн усă курма тĕллев лартнă.

Аса илтеретĕп, пур ача та паха пĕлӳ илме пултартăр тесе, 2002 çултанпа республикăра «Шкул автобусĕ» программа ĕçлет. Паян 780 ялти 11 пин ытла ачана 273 автобус база шкулĕсене турттарать. 49 автобуса «Вĕрентӳ» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн туяннă. Йĕпреç районне 9 автобус уйăрнă. Куллен вĕсем 21 ялтан 350 ачана турттараççĕ.

Çак мерăсене йăлтах вĕренӳ пахалăхне лайăхлатассипе çыхăннă проблемăна татса пама йышăннă. Эпир çакна пурнăçлама пултартăмăр-и? Тĕпрен илсен – пултартăмăр. Ялти пысăк база шкулĕсенче (вĕсенче ачасен 46,8 проценчĕ вĕренет) вĕрентӳн ĕç кăтартăвĕсем хуласенчи шкулсен кăтартăвĕсемпе танлашрĕç. Çакна яллă вырăнти шкулсем ачасемпе вĕрентекенсем тĕрлĕ конкурссенче, олимпиадăсенче туптанă çитĕнӳсем, пĕрлĕхлĕ патшалăх экзаменсен кăтартăвĕсем çирĕплетеççĕ (тĕслĕхрен, хула шкулĕсенче вĕренекенсем математикăпа тытнă ППЭ вăтам балĕ 54,83 пулсан, ял шкулĕсенче вĕренекенсен – 54,08). База шкулĕсем вĕрентӳн чи пысăк ыйтăвĕсене тивĕçтерсе тăнине Раççей Президенчĕн тата Чăваш Ен Президенчĕн гранчĕсене çĕнсе илессишĕн ирттерекен конкурс пĕтĕмлетĕвĕсем те кăтартса параççĕ. 96 база шкулĕ çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ, ку кăтарту грант илнисен пĕтĕмĕшле шучĕн 70 проценчĕпе танлашать. Эпир çакăн пек кăтартусем пуласса кĕтнĕ те.

Шкулсене пĕрлĕхлĕ патшалăх экзаменĕсем парассине пурнăça кĕртнипе çыхăнтарса реконструкцилени уйрăмах ялти шкулсенчен вĕренсе тухакансене аслă вĕренӳ шкулĕсене кĕме пысăк майсем уçса пачĕç. Енчен те 2000 çулта аслă шкулсене темиçе ял çамрăкĕ çеç вĕренме кĕме пултарнă пулсан, 2006 çулта ялти шкулта вĕренекенсен 45 проценчĕ студентсем пулса тăнă. Йĕпреç районĕпе ку кăтарту 45,3 процентпа танлашать, пĕтĕм республикăра вара 63 процента çитет.

Вĕрентӳ пахалăхĕн тепĕр кăтартăвĕ – вĕренекенсем тĕрлĕрен интеллект конкурсĕсене, ăмăртусене хутшăнни. Республикăра вăйлă аталаннă талантлă ачасене пулăшма нумай шайлă система туса хатĕрленĕ. Инноваци шкулĕсем ĕçлеççĕ, тĕрлĕ шайри интеллект тата пултарулăх конкурсĕсем ирттереççĕ. Талантлă вĕренекенсем валли уйрăм программăсем туса хатĕрленĕ, вĕсемпе республикăри паллă ученăйсемпе педагогсем ĕçлеççĕ, лагерьсенче профиль сменисене йĕркелеççĕ, пултаруллă çамрăксене стипенди тĕлĕшĕнчен хавхалантараççĕ. Паллах, çак мерăсем хăйĕн çимĕçне параççех. Пĕтĕм тĕнчери, Пĕтĕм Раççейри тата регионсем хушшинчи конкурссемпе олимпиадăсен çĕнтерӳçисем пирĕн республика мăнаçлăхĕ пулса тăраççĕ. 2007 çулта призерсен хисепĕ çирĕм саккăра çитрĕ, 2000 çулта вара иккĕн çеç пулнă. Ку енĕпе республикăри Г. Лебедев ячĕллĕ лицей-интернатра, 3-мĕш тата 44-мĕш номерлĕ лицейсенче, Çĕнĕ Шупашкарти 6-мĕш номерлĕ гимназире, Çĕмĕрлери 2-мĕш вăтам шкулта вĕренекенсем ырă тĕслĕхпе палăрчĕç.

Йĕпреç районĕнчи вĕренекенсем те хăйсене лайăх енĕпе кăтартса пачĕç. Вĕсем хушшинче республикăри вĕренекенсен предмет олимпиадин 6 призерĕ, республикăсем хушшинчи тупăшун 1 призерĕ пур тата «Excelsior» наукăпа практика конференцийĕнче тăваттăн çĕнтернĕ. Çак вĕренӳ çулĕнче вĕсен йышĕ тата нумайрах пуласса шанса тăратăп.

Юлашки çулсенче вĕрентӳ процесне информаци технологийĕ активлă кĕрсе пырать. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă чух республикăри 21 ачана çĕнĕ йышши пĕр компьютер тивнĕ. «Вĕрентӳ» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн пур шкула та Интернетпа çыхăнтарнă. Йĕпреç районĕнчи 13,7 вĕренекене пĕр компьютер тивет. Шкулсене хальхи шайри интерактивлă тата мультимедиллĕ оборудованипе тивĕçтеретпĕр. Интернет учительсемпе ачасене информаци вĕрентĕвĕн тĕрлĕ ресурсĕсемпе усă курма май парать.

Паян республикăри учительсен 60 проценчĕ ытла информаципе коммуникаци технологийĕсене алла илнĕ, вĕсенчен 30 проценчĕ çак пĕлӳпе кулленхи ĕçре усă курать.

Çакна уйрăмах палăртса хăварасшăн: вĕрентӳн мĕн пур ыйтăвне хăй тĕллĕн татса параймастăн, вĕсене социаллă пурнăçпа экономикăн ытти проблемисемпе пĕрле комплекслăн пăхса тухма тивет. Акă, шкулсем валли ятарлă автобуссем туянтăмăр – лайăх çулсем кирлĕ пулчĕç, унтан – çĕнĕ рейссем уçмалла. Çапла майпа ял çыннисем валли хальхи вăхăтри социаллă пулăшусем хушăнчĕç, вак бизнес аталанма пуçларĕ, яла çĕнĕ шайри культура килсе кĕчĕ.

Шăпах пур проблемăна та комплекслăн татса пани пире кăçал вĕрентĕве модернизацилемелли комплекслă проекта пурнăçлассипе йĕркеленĕ конкурсра выляса илме пулăшрĕ. Çак конкурса 53 регион заявка панă, 21-шĕ çĕнтернĕ. Республика проекта хутшăнса федераци бюджетĕнчен 209 млн. ытла тенкĕ илме пултарчĕ. Çав укçан пысăк пайне пирĕн шкулсен пурлăхпа техника тата вĕрентӳ базине модернизацилеме кайнă, çав шутра пуçламăш классем валли хальхи вăхăтри сĕтел-пукан, шкул столовăйĕсем валли оборудовани, çавăн пекех шкулсем валли вырăс тата чăваш чĕлхисемпе илемлĕ, вĕрентӳпе методика литератури туяннă, кадрсене курссенче вĕрентнĕ.

Сăмахран, акă, вĕрентĕве модернизацилемелли комплекслă проекта пурнăçласа района 2 млн. 329 пин тенкĕ чухлĕ субсиди уйăрса панă. Çак укçа-тенкĕпе база шкулĕсенче юсав ĕçĕсем туса ирттерме усă курнă. Кăçалхи авăн уйăхĕнче пур шкула та пĕрремĕш классем валли сĕтел-пукан 408 пин тенкĕлĕх, база шкулĕсене столовăй оборудованийĕ 768 пин тенкĕлĕх туянса панă.

Тарăн та паха пĕлӳ илме май туса паракан тепĕр приоритет – вĕренӳ учрежденийĕсене нормативпа финансласси çине куçарни.

***– Вĕренӳре висĕ ен – учитель, шкул тата çитĕнекен ăру тĕп вырăн йышăнаççĕ. Вĕсене хавхалантарас тата пулăшас тĕлĕшпе республикăра мĕн тăваççĕ?***

– Юлашки çулсенче Чăваш Енре инноваци активлăхне çĕклес тĕлĕшпе нумай ĕç тунă: Президентăн 1000 ытла премине тата çамрăксем валли стипенди, педагогсемпе шкулсем, студентсемпе шкулта вĕренекенсем валли ятарлă грантсем туса хунă.

Конкурслăхпа талпăну пирĕн ĕç-хĕлĕн тĕп принципĕсем пулса тăчĕç.

Иккĕленӳ çук, наци проектне пурнăça кĕртсе пыни шкулсене инноваци тĕлĕшĕнчен вăйлăн аталанма, учительсен пултарулăхне çĕклеме хăватлă стимул пулса тăчĕ. Çĕнтерӳçĕ ятне ĕçе йĕркелессипе тата унăн содержанийĕпе, çĕршыври тата ют çĕршыври малта пыракан опыта концентрацилессипе чи лайăххисем тивĕçеççĕ.

Икĕ çул хушшинче конкурс процедурисене 40-е яхăн шкул тата учительсен 10 проценчĕ хутшăнчĕ. 66 шкулпа 224 учителе федераллă бюджетран патшалăх пулăшăвĕ панă, 40 шкулпа 60 педагог Чăваш Республикин Президенчĕн гранчĕпе премине илме тивĕçнĕ. Вăл шутран Йĕпреç районĕнчен – икĕ шкул тата икĕ педагог.

Палăртма кăмăллă, хăйсен инноваци ĕç-хĕлĕпе опытне кăтартма тата обществăра паллă вырăн йышăнма талпăçакан учительсен шучĕ ӳссех пырать. Акă 2007 çулта 112 гранта илессишĕн конкурса пĕтĕмпе 470 вĕрентекен, çав шутра Йĕпреç тăрăхĕнчен 18 учитель хутшăнчĕç.

Паллах, проектра воспитани темине пысăк вырăн пани – ырă пулăм. 7706 класс ертӳçи (учительсен пĕтĕм хисепĕн 55 проценчĕ) класпа ĕçленĕшĕн хушма укçа-тенкĕ илет.

Воспитани ĕçне йĕркелес тĕллевпе тĕрлĕ проектсем туса хатĕрлеççĕ тата вĕсене ĕçре алла илеççĕ. Икĕ çул хушшинче воспитани енĕпе чи лайăх инноваци проекчĕсене палăртассипе 15 ытла конкурс ирттернĕ. Кашни тăваттăмĕш класс ертӳçи вĕсене хутшăннă.

***– Пуçланă реформăсен ăнăçлăхĕ талантлă учитель-лидерсен ĕçĕ-хĕлĕпе уйрăлми çыхăннă. Вĕсене шкулта çирĕплетсе хăварас тесен тивĕçлĕ ĕç укçи тӳлемелле.***

– Ман шутпа, малалла кайма май паракан чи эффективлă условисенчен пĕри – шкулта ĕçлекенсене отрасльти çĕнĕ системăпа ĕç укçи тӳлеме тытăнни. Çак система кăçалхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче вăя кĕчĕ, вăл тӳлев фончĕн база тата хавхалантару пайĕсенчен тăрать. Вĕсем ĕç пахалăхĕпе тата результачĕсемпе уйрăлми çыхăннă.

Ĕç укçи тӳлемелли çĕнĕ система эксперимент майĕпе республикăри 30 шкулта туллин пурнăça кĕрĕ. Йĕпреçри 1-мĕш вăтам шкул та çак йышра. Вĕсенче педагогсене 36 сехетлĕ ĕç эрнишĕн должноçри ĕç укçине тӳлеççĕ.

Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, 2006 çулхипе танлаштарсан, педагогсен уйăхри ĕç укçи 25 процент ӳсрĕ. Пурĕ вара, 2006 çулхи шайпа танлаштарсан, виçĕ çул хушшинче учительсен вăтам ĕç укçи икĕ хут ӳсмелле.

***– Шкул ĕçне общественноç представителĕсене анлăн хутшăнтарни – наци проекчĕн тĕп задачисенчен пĕри. Ку тĕлĕшпе пирĕн республикăра еплерех ĕçлеççĕ-ха?***

– Наци проекчĕ пурнăçа кĕрсе пыни республикăра вĕрентĕве ертсе пырас ĕçре патшалăхпа общественноç системине аталантарма май туса пачĕ. Обществăлла организацисем чи лайăх шкулсемпе учительсене суйласа илме конкурс ирттерчĕç. Çак ĕçе Чăваш Республикинчи попечительсен вĕрентӳ союзĕ йĕркелесе пырать.

Ашшĕ-амăшĕсен пĕрлешĕвĕ – обществăлла шухăшлава йĕркелемелли пысăк вăй. Паян вĕсем шкул ĕçĕ çине аяккинчен пăхса тăмаççĕ, вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатма хăйсем сĕнӳсем параççĕ. Республикăри кашни шкултах попечительсен е управляющисен канашне йĕркеленĕ, вĕсем вĕренӳ процесĕ çине кăна мар, учительсене ĕç пахалăхне кура ĕç укçи тӳлесси çине те витĕм кӳреççĕ.

Паянхи кун районти пур шкулта та управляющисен канашĕсем ĕçлеççĕ. Йĕпреçри 1-мĕш вăтам шкулта попечительсен канашне туса хунă. Чăваш Тимеш тата Йĕпреçри 1-мĕш вăтам шкулсен никĕсĕ çинче шкулти попечительсем тата управляющисен канашĕсен моделĕсене тĕрĕслесе тăмалли республикăри экспериментлă педагогика площадкисем ĕçлеççĕ. Вĕрентӳ пайĕ çумĕнче муниципалитетăн управляющи канашне туса хунă. Эпĕ маларах палăртса хăвартăм, çак çултан пуçласа управляющи канашĕсем вĕрентĕве модернизацилемелли комплекслă проекта пурнăça кĕртес ĕçе пуринчен активлă хутшăнаççĕ.

Тепĕр хут палăртса хăварасшăн: шкулсен, ашшĕ-амăшĕсен, общественноçăн вăй-халне пĕрлештерсен кăна эпир хамăр çĕршыв валли тивĕçлĕ гражданинсем çитĕнтерме, хамăр ачасене малашлăхра хăйсен пурнăçĕнче тата професси тĕлĕшĕнчен çитĕнӳсем туптама пулăшма пултаратпăр.

***– Йĕпреç районĕнчи педагогсен общественноçне мĕн сунатăр?***

– Пултарулăх тата ӳсĕмсем, инноваципе çĕнĕ проектсен шыравĕнче ăнăçу тата лайăх кăтартусем, сывлăхпа телей сунатăп.

САНĂН ÇЫННУСЕМ, РАЙОН



**Этемлĕх хăй историйĕн тăршшĕнче «Мĕн-ши вăл, телей?» текен ыйту çине хурав тупасшăн. Кашни çыннах çак ыйту канăç памасть пулсассăн та, эпир кашнин телейĕ мĕнлерех шайрине тĕрĕс палăртма пултараймастпăр, мĕншĕн тесен телей формулине нумай çулхи тĕпчев-сăнавсемпе те тĕрĕс кăларма май çук. Ара, телейлĕ пулма «пулăшакан» сăлтавсем те нумай çав. Çынна тăраниччен çитерме тата ĕçтерме кирек кам та пултарĕ, анчах та хăйĕн телейне çитме вăл хăй кăна вăй-хал тупĕ.**

# ТЕЛЕЙ ФОРМУЛИ

Шăпах çак шухăша тĕпе хурать хăйĕн кулленхи ĕçĕнче «Йĕпреç районĕн тĕп больници» сывлăх сыхлавĕн муниципалитет учрежденийĕн врач-педиатрĕ Людмила Анатольевна Царегородцева. «Пурăннă чухне савăнма пĕлмелле. Эпĕ ыттисене те çавăн пек сĕнÿ паратăп: мĕн тунипе нихăçан та лăпланса лармалла мар, вăхăтлăха килсе тухнă йывăрлăхсем те хăвăр суйласа илнĕ çулйĕртен пăрса яма ан пултарччăр. Çавăн чухне кăна кĕтнĕ телей сирĕн алăра пулĕ».

Людмила Анатольевна хăйĕн пурнăçĕпе питех те кăмăллă, мĕншĕн тесен вăл телей формулине шыраса тупнă кăна мар, кашни кунах хăйĕн ятне тÿрре кăларма тăрăшса, хĕрарăмсене амăшĕн телей-савăнăçне туллин туйса тăма пулăшать. Çакă мар-и вара телей!

Людмила Анатольевна – коллективра пурте хисеплекен çын. Ăна районта та, унăн тулашĕнче те лайăх пĕлеççĕ. Мĕншĕн-ха ун пирки шăпах паянхи кун аса илтĕмĕр эпир? Тивĕçлĕ сăлтав пуртан: çак кунсенче вăл чаплă юбилей саламĕсем йышăнать. Хĕрарăмăн, кун-çул çирĕпленнĕ тăрăх, юбилейсем çук, вăл çуралнă кунĕсене çеç уявлать иккен. Кĕрекене ларма тивĕçнĕ Людмила Анатольевна хăйĕн черетлĕ, 55-мĕш çуралнă кунне кĕтсе илчĕ.

Людмила вăрман хуçалăх ĕçченĕсен çемйинче çуралса ÿснĕ. Ашшĕ, Анатолий Степанович, тата амăш, Ефросинья Емельяновна Атăл тăрăхĕнчи Йошкар-Олари вăрман техникин институтĕнчен вĕренсе тухнă. Анатолий Степанович хăй вăхăтĕнче республикăри вăрман промышленноçĕн комплексĕнче малта пынă – Йĕпреçри вăрман комбиначĕн директорĕнче пултаруллăн ĕçленĕ. Ефросинья Емельяновна та упăшкипе юнашарах тăрăшнă. Вĕсем иккĕшĕ те числă-сумлă çынсем пулнă. Анчах та Шереметьевсен аслă хĕрĕ урăх çул-йĕр суйласа илнĕ: Йĕпреçри пĕрремĕш номерлĕ вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн вăл медицина училищинче пĕлÿ пухнă. Диплом илсен, çамрăк специалиста Йĕпреçри тĕп больницăна янă, вăл терапи уйрăмĕнче медсестра тивĕçне пурнăçланă. Нумай та ĕçлемен, райцентрти садиксенчен пĕринче сестра-воспитательница кирли çинчен пĕлнĕ. Кăчăк туртсах илĕртнĕ ăна унта ĕçлекенсем. Çав садикранах хĕр Чулхулари медицина институчĕн педиатри факультетне кайса кĕнĕ. Ку вăл 1973 çулхи çурла уйăхĕнче пулнă. Хăвăрттăн иртнĕ студент çулĕсем. 1979 çулта Людмила Анатольевна Канаш районĕн тĕп больницине килнĕ. Вăл Шăхасан салинче вырнаçнă. Унта лекме шăпа тухнине вăл чăн-чăн телей вырăнне хурса йышăннă. Ара, çак больницăн СССР халăх врачĕ, медицина ăслăлăхĕсен докторĕ, республикăри паллă хирург Фирс Григорьевич Григорьев тĕп врач вăй хунă-çке. Çамрăк вара çавăн чухне педиатри йытăвĕсемпе пĕр çуллăх интернатурăра вĕреннĕ, пĕлĕвне палăрмаллах пуянлатнă.

Интернатурăна вĕçлесен, Йĕпреç хĕрĕ ашшĕпе амăшĕ патнех таврăннă, Йĕпреç районĕн тĕп больницинче участокри врач-педиатр пулса тимлеме тытăннă. 1983 çулхи утă уйăхĕн 2-мĕшĕнче ăна районăн тĕп педиатрне лартнă та, вăл мĕн паян кунччченех çак тивĕçе чыслăн пурнăça кĕртсе пырать. Кунпа пĕрлех ачасен консультацийĕнче те участокри врач-педиатр ĕçне йĕркелесе пыма вăхăт тупать. Пулас амăшĕсене, нумай ачаллă хĕрарăмсене вăл паракан сĕнÿ-канаш мĕн тери кирлĕ!

«Пирĕн чи малтанах çынна итлеме вĕренмелле, – тет Людмила Анатольевна. – Хамăр пата килекенсене тепĕр чухне питĕ йывăр пулнине куç хÿрипе пăхсах ăнланатăп. Врач сăмахĕсене тимлесех итленине курсан, хăв та хавхаланса каятăн. Чăнах та çынна итлеме пĕлни вăл – пысăк ăсталăх кăна мар, Турă пани те. Эпир ыттисене итлеме вĕренсе çитрĕмĕр. Çакă вара чунчĕрен чи паха енĕсенчен пĕри пулса тăрать».

Хăйĕн ĕçĕнче çавăн пек усăллă калаçусем мĕн чухлĕ ирттермен-ши çынсене ырлăх кÿрессишĕн тăрăшакан кăмăллă хĕрарăм. Вăл кашнинпех пĕр чĕлхе тупма пултарать. Чунчĕри çав тери сисĕмлĕ пулнăран врач-педиатр вăл е ку хĕрарăма мĕнле нуша-инкек канăç паманнине нимĕнле хатĕрсĕрех тĕрĕс пĕлме вĕренсе çитнĕ.

Шурă халатлă врач хăйĕн профессине калама çук юрататать. Ун патĕнчен тухса каякансен куçĕсем еплерех тасан та çуттăн ялкăшаççĕ! Вĕсенче хăйсем юратнă тухтăрăн илĕртÿллĕ сăнарĕ çуталса тăнăнах туйăнать. Çынна пулăшу кирлĕ вăхăтра вăл яланах юнашар пулма, ăшă туйăмлă сăмахпа йăпатма тăрăшать.

Людмила Анатольевна Царегородцева (хĕр чухнехи «граф» хушаматне вăл упăшкин «патша» хушамачĕпе улăштарни те чăн-чăн телей!) пурнăçĕнчи паллă чаплă кун ячĕпе саламсем йышăнать терĕмĕр. Пархатарлă ĕçшĕн унăн тĕрлĕ çĕртен панă тав хучĕсемпе грамотăсен шучĕ те çук. Анчах та вăл хăйĕн тĕп награди ачапа амăшĕн сăн-питĕнче кăмăллăн çиçекен кулă тесе шутлать. Врач-педиатрăн телей формули шăпах çавăнта пытаннă та.

***Геннадий КУЗНЕЦОВ.***

## САЛАМЛАТПĂР

Хисеплĕ те хаклă çыннăмăра, кашнинпех пĕр чĕлхе тупма пĕлекен ĕçтешĕмĕре, Йĕпреç райповĕн обществăлла апатлану предприятийĕн ертÿçине – **Ираида Борисовна МАКСИМОВАНА** – пĕтĕм чунтан-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе чаплăран та чаплă юбилейпа – 50 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума, вăрăм та çутă ăраскаллă ĕмĕр пурăнма юман пек çирĕп, ирхи сывлăм пек таса сывлăх, чăмппи тулса – тăкăнса тăракан çăлкуç пек иксĕлми телей-савăнăç, тивлетлĕ кун-çул сунатпăр.

50 çул вăл – паллă çул,
Тата пурнăр çавăн чул.
Умра вырттăр такăр çул,
Пулни-иртни çине алă сул.

***Хисеплесе «ДОРОЖНОЕ» КАФЕ ĔÇЧЕНĔСЕМ.***

КРИМИНАЛ

## АЛРАНАХ ЯРСА ИЛНĔ

Шалти ĕçсен Йĕпреç районĕнчи пайĕ çумĕнчи следстви уйрăмĕ хальхи вăхăтра хĕрсех авăн уйăхĕн 30-мĕшĕнче çĕрле Хумри Ишек ялĕнчи масар çинчен алюмини картасене çаратнипе çыхăннă РФ Уголовнăй кодексĕн 158 статйин 2-мĕш пайĕн «а» пункчĕ тăрăх пуçарнă уголовнăй ĕçе тĕпчессипе тимлет.

Çав кун икĕ чикан хĕрлĕ тĕслĕ «Москвич» автомашинăпа Хурамал тăрăхне тĕслĕ тата хура металл пухас тĕллевпе пырса çитнĕ. Хурамалта металл пухса паракансем пулманнине кура вĕсем хаяррине ĕçсе ÿсĕрĕлнĕ те каç пулттипе Хумри Ишек еннелле вĕçтернĕ. Кунти масар çине кĕрсе «тĕрĕсленĕ». Хăйсемпе пĕрлех машина çинче илсе çÿрекен лумпа алюмини картасене çĕмĕрме тытăннă. 85 метр тăршшĕ чухлĕ аркатнă вĕсем картана, ăна пайăн-пайăн çăмăл машина салонне тата багажнике тултарнă. Унтан ним пулман пекех машинăна кĕрсе ларнă та хăйсен ушкăнпа çÿрекен ытти чикансем чарăннă вырăна, Канаш тата Комсомольски районĕсем чикĕленнĕ çĕре тухса кайнă. Анчах шутланă вырăна çитеймен вĕсем, тĕслĕ металл «хуçисене» милици сотрудникĕсем тытса чарнă, тÿрех шалти ĕçсен районти пайне илсе кайнă.

Айăпа кĕнĕ чикансенчен пĕрне следователь унччченхи киревсĕр ĕçсенчен аван пĕлет. Ăна унччен пирĕн район территорийĕнче лаша вăрланă темиçе ĕç тăрăх судпа айăпланăччĕ. Хальхи вăхăт тĕлне пурлăх çаратакансене тимĕр решеткеллĕ алăк хыçне хупса хунă, вĕсем çаратнă 300000 тенкĕлĕх пурлăха каялла туртса илнĕ.

Пирĕн районта кун пек масарсенчен вилтăприсем тавралла тытса çаврăннă картасене çаратнă тĕслĕхсем унччен те пулнă, анчах çав ĕçсене ку таранччен те уçса парайман. Тĕслĕхрен, çĕртме уйăхĕн 13-14-мĕшĕсем хушшинчи çĕрле паллă мар çынсем Хурамал ялĕн масарĕнчен дюралюминирен тунă декоративлă пластинăсене çаратса кайнă, Хурамал ял тăрăхне 15000 тенкĕлĕх тăкак кÿнĕ. Ун чухне те çак яла чикансен ушкăнĕ килсе кайнă, вĕсем те ял тăрăх металл пухнă пекки тукаласа çÿренĕ. Халăхран тĕслĕ е хура металл пухассине вĕсем, паллах ĕнтĕ, саккунсăр майпа пурнăçланă, вĕсен çакна валли нимĕнле документ та, нимĕнле лицензи те пулман.

Районти поселоксемпе ялсенче пурăнакансенчен çакна ыйтатпăр: сирĕн ялта шанчăксăр çынсем, уйрăмах чикансем курăнсанах çакăн çинчен милицин участокри уполномоченнăйне е дежурнăй чаçне пĕлтерме васкăр. Чикансем ахаль çÿремеççĕ, вĕсен «хура ĕç» тăвас шухăшĕ нихăçан та пĕтмест.

***С. ВЕНЕДИКТОВ, шалти ĕçсен районти пайĕ çумĕнчи следстви уйрăмĕн следователĕ.***

## ИЗБИРАТЕЛИ СЧИТАЮТ «ЕДИНУЮ РОССИЮ» НАИБОЛЕЕ ПАТРИОТИЧЕСКОЙ ПАРТИЕЙ

Согласно результатам недавнего опроса ВЦИОМ, обнародованные 12 октября в Москве, свидетельствуют, что за партии, отстаивающие патриотические ценности, готовы отдать свои голоса на ближайших выборах в Государственную Думу 60% избирателей. Партии, отстаивающие демократические ценности, по данным ВЦИОМ, намерены поддержать 40%, а партии социалистической, левой направленности - 38%, передает «Интерфакс».

Готовность голосовать за партии патриотической направленности в большей степени свойственна респондентам 60 лет и старше: так готовы поступить 65% из них. Но и среди опрошенных 18-24 лет патриотический выбор актуален для 55%.

На вопрос социологов - «За какую из партий патриотической направленности Вы допускаете возможность проголосовать?» - 76% избирателей – сторонников партий, отстаивающих патриотические ценности, назвали «Единую Россию», 15% - «Справедливую Россию», 12% - КПРФ, по 4% - Аграрную партию России и «Патриотов России», 2% - «Народный союз».

По данным ВЦИОМ, среди партий, отстаивающих левые, социалистические ценности, 63% избирателей-»социалистов» допускают возможность проголосовать за «Единую Россию», по 17% - за КПРФ и «Справедливую Россию», 6% - за Аграрную партию, 4% - за «Патриотов России», 1% - за «Народный союз»

Согласно результатам сентябрьских опросов ВЦИОМ, «Единая Россия» стоит на первом месте в рейтинге политических симпатий и избирателей-»демократов»: за нее допускают возможность проголосовать 70% респондентов, ближайший соперник - СПС - имеет поддержку 8%.

Таким образом, результаты опросов свидетельствуют, что «Единая Россия» является безусловным лидером политических симпатий всех основных категорий российских избирателей.

Инициативный всероссийский опрос ВЦИОМ проводился 6-7 октября в 153 населенных пунктах в 46 областях, краях и республиках России с участием 1600 человек. Статистическая погрешность не превышает 3,4%.

ОБРАТНАЯ СВЯЗЬ

## «ВАЖНЫЙ ВОПРОС» ОТВЕЧАЕТ

**Вопрос**: **Кто имеет право на получение путевки в Реабилитационный центр для ветеранов и инвалидов?**

Макаров Константин Николаевич, г. Чебоксары

**Ответ:** Право на получение бесплатных путевок имеют сохранившие способность к самообслуживанию и активному передвижению:

-ветераны Великой Отечественной войны;

-родители и супруги погибших или умерших инвалидов войны, участников Великой Отечественной войны и ветеранов боевых действий;

-ветераны труда, ветераны и инвалиды боевых действий;

-инвалиды в рамках индивидуальной программы реабилитации инвалида;

-реабилитированные лица и лица, признанные пострадавшими от политических репрессий;

-пенсионеры, получающие трудовую пенсию по старости.

**Вопрос**: **Из-за отсутствия городской прописки мне отказывают в приеме на работу. Правомерно ли это?**

**Ответ:** Отказ работодателя принять Вас на работу по причине отсутствия городской прописки является незаконным. Согласно ст. 3 Трудового кодекса Российской Федерации каждый имеет равные возможности для реализации своих трудовых прав. Трудовой кодекс не допускает каких-либо ограничений права при заключении трудового договора, даже если у Вас нет регистрации по месту жительства. Если Вы считаете, что подверглись дискриминации в трудовой сфере, то можете обратиться в инспекцию труда по Чувашской Республике, либо в суд.

**Вопрос**: **В молодости я часто сдавала кровь для больных, нуждающихся в постоянном переливании крови. Могу ли я претендовать на получение звания «Почетный донор»?**

**Ответ:** Ваши добрые дела и бескорыстное желание помочь больным людям заслуживают большого уважения. Согласно **Постановлению Правительства РФ от 19 ноября 2004 г. N 663 «О порядке награждения граждан нагрудным знаком «Почетный донор России»,** звание «Почетный донор» присваивается гражданам, сдавшим бесплатно кровь 40 и более раз, или плазму крови 60 и более раз.

Передачу «Важный вопрос» также слушайте по будним дням на «Радио России» и радио «Маяк». Ведущий – депутат ЧГСД Евгений Слепов.

**Письма с вопросами присылайте на адрес газеты «За победу».**

РЕДАКЦИЕ КИЛНĔ ÇЫРУ

## ЫРĂ ĔÇ ЧУНА ÇЫВĂХ

Урама асфальт çул сарнă хыççăн, çуркуннепе кĕркуннесенчи йĕпе-сапара пирĕн пахча шыва каятчĕ, картишне те шыв кĕретчĕ. Çĕр час типменнипе асапланаттăмăр, тухса çÿреме те çукчĕ. Юрать-ха пирĕн нушана ăнланакансем тупăнчĕç. Çак кĕркунне шыв-шур нушине курмăпăр ĕнтĕ. Йĕпреç хула тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. А. Андреев тăрăшнипе шыв çулне уçрĕç, вăл текех пире чăрмантармĕ.

Ватă çынсене ырă ĕç туса пулăшнăшăн поселок мэрне чунтан-чĕререн тав тăватпăр, ÿлĕмрен те хамăр тăрăхра пурăнакан çынсемпе çывăх пулса ĕçлесе пыма ырлăх-сывлăх сунатпăр. Ĕçĕрсем ăнсах пыччăр, тĕллевсем пурнăçланччăр.

***Ырă сунса Йĕпреçри Мир урамĕнчи 19-мĕш çуртра пурăнакан вăрçăпа ĕç ветеранĕсем Павел Герасимович тата Валентина Семеновна МОИСЕЕВСЕМ.***

**Восьмидесятилетний житель п. Ибреси Геннадий Портнов долгое время страдал недугами. То у него давление высокое, то голова кружилась так, что без лекарств и палочки-выручалочки никуда не выйдешь. А недавно он узнал о массажно-оздоровительном салоне «Татьяна», что находится на 2 этаже дома №41 «б» по улице Энгельса, направился туда и прошел полный курс оздоровительных процедур, которые позволили ему сразу же отказаться от дорогостоящих лекарств и от помощницы – палки. В этом ему помогла чудо-кровать, массажер Нуга Бест и чудесницы – две Татьяны, которые несут добро и здоровье всем, кто обращается к ним.**



# ЧУДО-КРОВАТЬ ДЛЯ ЗДОРОВЬЯ И КРАСОТЫ

В массажно-оздоровительном салоне «Татьяна» (заведующая Татьяна Ивановна Алексеева) установлено современное оборудование для всех видов массажа и комплексного прогревания всего организма. Салон работает с 24 июля т. г., и за этот период в его уютных и светлых кабинетах побывало немало посетителей. Среди них большинство люди пенсионного возраста, ветераны войны и труда. Каждый из них остался довольным с результатами оздоравливающих процедур. Все очень рады, что у нас в райцентре есть такая лечебница, где за несколько сеансов в любом возрасте можно восстановить свое здоровье и вернуться к активной жизни.

С помощью кровати-массажера можно полностью очистить кровь, избавиться от хронических болезней, от заболеваний щитовидной железы, желудочно-кишечного тракта, мочеполовой системы, и самое эффективное – это оздоровление позвоночника. Медициной доказано, что все недуги и болезни человека идут от нездорового позвоночника.

В салоне «Татьяна» недавно установили и другие комплексы современной оздоравливающей техники, также имеются тренажеры для коррекции фигуры. Чудесные живительные результаты дает согревающий мат. Нуга, состоящий из множества округлых дисков из турманиевой керамики. С его помощью можно получить оптимальный массаж и прогревание биологически активных точек, избавиться от целлюлита и т. д. Здесь можно получить и ручной массаж.

Двери «Татьяны» открыты для всех желающих: по будним дням – с 10 до 20 часов; в субботу и в воскресенье – выходной.

Первый сеанс бесплатный! А остальные для работающих – 150 рублей, для пенсионеров – 100 рублей, для детей школьного возраста – 120 рублей.



# САМАХХАÇМĂШ



## ПОПРАВКА

**В материале «Роль уроков истории в патриотическом воспитании школьников» (№83 от 17 октября 2007 года) допущена ошибка. Вместо «а ученик Селендеев Петр» нужно читать «Алендеев Петр». Редакция газеты приносит свои извинения.**

**СУЛАХАЙРАН СЫЛТĂМАЛЛА:** 1. Сысна «ачи». 3. СССР халăх артистки, Александр Фадеев писателĕн мăшăрĕ. 8. Карап çинчи пусма. 13. «Уçланкăри ...» – юрă. 14. Кӳлĕ пулли. 15. АПШри штат. 19. Пирĕн республикăри район центрĕ. 20. Историе кĕрсе юлнĕ крейсер. 21. Хăй вăхăтĕнче çак спортсменка хăвăрт чупассипе Олимп чемпионки пулнă. 22. Хурткăпшанкă. 24. Чăвашрадион паллă дикторĕ. 29. Кадр айне çырнă текст. 29. Кино ӳкерекен пĕрлешӳ. 30. Шыв ăсмалли хатĕр. 31. Гана çĕршывĕн шĕкĕр хули. 32. Авалхи чăвашсен йăхташĕ. 33. Вырăссен паллă поэчĕ, вăл В. В. Маяковскипе туслă пулнă. 34. Уралти юханшыв. 35. Вĕрентӳ предмечĕ. 36. Чул çине ӳкерни тăрăх пичетлени. 40. Çар техники. 45. Пархатарлă ĕçшĕн паракан хут. 47. Чăваш халăх писателĕ, драматург, врач. 48. Больницăри пӳлĕм. 49. Пирĕн районти ял. 53. Çӳççĕр пуç. 54. Кухньăри хĕрарăмăн ĕç хатĕрĕ. 55. Çывăх тăван. 56. Пирĕнпе кӳршĕллĕ патшалăх. 57. Чăвашсен паллă çыравçи, Пушкăрт Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

**ÇӲЛТЕН АЯЛАЛЛА:** 1. Шелепи мухтаса çырнă Тутар Республикинчи юханшыв. 2. Спорт хатĕрĕ. 4. Ӳсен-тăран пайĕ. 5. Чăваш Республикинчи юхан шыв. 6. Терт-асап, вăл кулач çитерет. 7. Выльăх апачлĕх культура. 9. Раççейри облаç центрĕ. 10. Чун-чĕрери ырă туйăм. 11. Чăваш хĕрарăмĕн ячĕ. 12. Вăрнар районĕнчи пысăк ял. 16. Оптикăллă квант генераторĕ. 17. Искусство тĕсĕ. 18. Дмитрий Пожарскин çывăх тусĕ. 23. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи ял. 26. Тахçан союзлă республикăччĕ, халĕ вăл – уйрăм патшалăх. 27. Чăваш арçынĕн ячĕ. 28. Пирĕн районти паллă механизатор. 35. Японири трагеди тӳснĕ хула. 37. Эстонири ватă хула. 38. Пĕр евĕрлĕ япаласен йĕрки. 39. Чечек. 41. Калемĕн çывăх «тусĕ». 42. Хуткупăс тĕсĕ. 43. Чăваш хĕрĕн ячĕ. 44. Инкек- ... . 46. Вăрман хуралçин çурчĕ. 49. Украин çыннин çурчĕ. 50. Чечек те, хĕрача ячĕ те. 51. Куккурусăн урăхла ячĕ. 52. Оптика хатĕрĕ.

## ПОЗДРАВЛЯЕМ

Дорогую сестру, любимую жену, милую няню – **КАЛИНИНУ Раису Николаевну,** проживающую в поселке Ибреси, – от всей души, горячо и сердечно поздравляем с днем рождения. Желаем вечной молодости, здоровья и красоты, любви и уважения всех, кто тебя окружает.

С Днем рожденья! Сил, здоровья!
Дома, что согрет любовью!
Замечательных друзей,
Новых планов и идей.
Потрясающих успехов,
Счастья, радости и смеха,
Сердца юного в груди,
Долгой жизни впереди.

***МУЖ, СЕСТРЕНКА, ПЛЕМЯННИЦЫ КАТЯ И ВАЛЯ.***

## САЛАМЛАТПĂР

Юратнă хĕрĕме, пире çепĕç туйăмпа савса ӳстернĕ аннемĕре, ырă та раватлă аппана – Чăваш Тимеш ялĕнче пурăнакан **Зинаида Алексеевна СЕНЦОВАНА** – çур ĕмĕр тултарнă ятпа ăшшăн-ăшшăн ыталаса, чун-чĕререн юратса саламлатпăр. Пире ялан пулăшса тăнăшăн, йывăр вăхăтра пуçна усманшăн, çывăх тăвансен савăнăç-телейне пĕрле пайлама кирек хăçан та вăхăт тупнăшăн тав тăватпăр. Вăрăм ĕмĕр пурăнма çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, çутă телей, юрату, таса ăраскал сунатпăр.

***АШШĔ, АМĂШĔ, АЧИСЕМ, ЙĂМĂКĔСЕМПЕ ШĂЛЛĔ, ВĔСЕН ÇЕМЙИСЕМ.***

## САЛАМЛАТПĂР



Юратнă кинĕме, кун çути пиллесе лăпка-лăпка ӳстернĕ, телей сунса пурнăç çулĕ çине кăларнă аннене, кăмăллă та сăпайлă хунямана, тараватлă инкене, хаклă кукамая – Хурамалта пурăнакан **Зинаида Антоновна СТЕПАНОВАНА** – пĕтĕм чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе чаплă юбилей ячĕпе – 50 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Вăрăм ĕмĕр, çутă ăраскаллă кун çул, телейлĕ те çителĕклĕ пурнăç, ачасемпе мăнуксенчен савăнăç кăна сунатпăр. Ан ватăл, ан чирле нихăçан, çут хĕвел пек пул пирĕншĕн ялан.

Юбилей ячĕпе саламлатпăр сана,
Çутă кулă кăна иленейтĕр сăнна.
Ырлăх-сывлăхлă пул, ĕмĕр савăккăн кул
Пурнăç çулĕ тăсăлтăр инçе-инçе...

***ХУНЯМĂШĔ, ХĔРĔСЕМПЕ КĔРӲШĔСЕМ, ЫВĂЛĔ, МĂНУКĔ ВИТАЛИК, СТЕПАНОВСЕН, КИРИЛЛОВСЕН, КЕРИМОВСЕН ÇЕМЙИСЕМ.***

х х х

Пăрчăкан пек ĕçчен, чĕкеç пек çепĕç, сар хĕвел пек ырă та ăшă кăмăллă пулнăшăн юратса кума тунă сăпайлă хĕрарăма, пĕчĕкренех пысăк анне тесе ӳснĕ, чĕрçи çинче утьăкка сикнĕ хаклă та çывăх çыннăмăра – **Зинаида Антоновна СТЕПАНОВАНА** (Хурамал ялĕ) – пĕтĕм чун-чĕререн сума суса çуралнă кунĕпе – 50 çул тултарнă ятпа саламлатпăр.

Вăрăм пултăр кун-çулу, ан пĕл хуйха,
Ут пурнăç çулĕпе ырра кăна туйса.
Сана хисеп те чыс туса эпир паян,
Хĕрӳ салам яратпăр ушкăнпалан.

***ХРЕСНА ЫВĂЛĔ ЯРОСЛАВ ФЕДОРОВ, КУМĂШĔСЕМ.***

## СООБЩЕНИЕ

**Администрация Ибресинского района Чувашской Республики сообщает, что на территории Хормалинского сельского поселения рядом с. Новые Высли Ибресинского района Чувашской Республики в 945 м. от ОМС-62 на северо-восток (бывшее ПСХ муниципального предприятия «Ибресинский паточный завод» вдоль реки Кубня) имеется возможность предоставления земельного участка в аренду площадью 24861 кв.м. (пастбища) для иных видов разрешенного сельскохозяйственного использования. Категория земель - земли сельскохозяйственного назначения.**

**Желающих просим обратиться в отдел экономики и управления имуществом администрации Ибресинского района (тел. 2-12-18, 2-33-33) или в администрацию Хормалинского сельского поселения (тел. 2-70-30).**

**АДМИНИСТРАЦИЯ ИБРЕСИНСКОГО РАЙОНА.**

**Ибресинский участок «Вурнарымежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз» выражает соболезнование бухгалтеру Маловой Н. В. по поводу смерти МАТЕРИ.**

**ООО «ИБРЕСИНСКИЙ ХЛЕБОЗАВОД»**
**требуется на работу газооператор.**
**Обращаться в отдел кадров райпо. Телефон: 2-29-62.**

**ОАО «ИБРЕСИНСКИЙ МОЛОЧНЫЙ ЗАВОД»**
**примет бухгалтера по расчетам с опытом работы. Справки по телефону: 2-17-20.**

**778. 8 уйăхри кĕсре СУТАТĂП. Тел.: 89196655712.**

Ответственность за подробность и точность фактов и прочих сведений, опубликованных в газете, несут авторы. Редакция может публиковать статьи в порядке обсуждения, не разделяя точку зрения автора.

*Главный редактор АЛИМАСОВ К. Д.*

Çĕнтерӳшĕн (За победу)

Учредитель: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела ЧР

Адрес РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу»: 429700, п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6

ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор — 2-11-92, ответственный секретарь — 2-11-93, отдел сельской жизни — 2-11-95, отдел по дубляжу — 2-11-96, бухгалтерия, стол заказов — 2-11-97. АДРЕС ГУП "Вурнарский издательский дом": 429220, п. Вурнары, пер. Коммунальный, 4. ТЕЛЕФОНЫ: 2-12-30, 2-19-40.

Газета зарегистрирована Приволжским окружным межрегиональным территориальным управлением Министерства РФ по делам печати, телерадиовещания и средств массовых коммуникаций 13 августа 2002 года. Регистрационный номер ПИ № 18-0918.

Номер набран и сверстан в компьютерном отделе редакции, отпечатан в ГУП "Вурнарский ИД". Индекс 54814. Офсетная печать. Объем 1,5 п. л. Тираж 3251 чув. – 2418, русск. – 873. Зак. №

Газета выходит два раза в неделю — по средам и субботам на чувашском и русском языках. Материалы на правах рекламы обозначены знаком ⓟ
Срок сдачи в печать — 17.00
Сдан в печать в 10.00

Ответственный за выпуск Димитриев Д. В.